

# Петĕр Хусанкая асăнса

Петрана Клисурова /Болгари/ ÿкерчĕкĕ.

Халал сăввисен хăйне уйрăм поэзи тĕсĕ. Чăваш сăмахлăхĕнче вăл XX ĕмĕрте тин çуралнă. Ун чухне чăваш культуринче ÿнерпе литература, мусăкпа театр çыннисен хушшинче туслă хутшăнусем йĕркеленсе каяççĕ, тÿре-шараран уйрăм тăракан чăваш интеллигенцийĕн официаллă мар ушкăнĕсем çуралаççĕ. Сăвăçсем хăйсен йăлипе çав чăнчăн «арçынла туслăха» мухтаса, çирĕплетсе пĕр-пĕрне халалласа сăвăсем хайлаççĕ. Çак енчен илес пулсассăн Петĕр Хусанкая халалланисем чăваш поэзийĕнче сахал. Хăй çинчен вăл пĕрре çапла çырнăччĕ: «Эп - çирĕммĕш ĕмĕр çынни». Çав XX ĕмĕр тăршшĕпе кампа кăна сума суса паллашман вăл, кама кăна халал сăввисем хывман. Мехел çитсен П.Хусанкайăн халалĕсене уйрăм кĕнекен «станпа çапса» кăларăпăр -ха. Хăй калашле, «сăпайлăн, кăмăллăн та ырăн // Курасчĕ ман кашни çынна». Хусанкай халалĕсенчи ăна çывăх çынсем чăнах та çавăн пек курăнаççĕ.

Халĕ вара, «Тăван Атăл» вулаканĕсене сĕнекен халалсем пачах урăхла, Петĕр Хусанкая хăйне халалланă сăвăсем. Кунта эпир унăн саманташĕсене те куратпăр, иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулсенче Хусанкайпа пĕрле вăй хунă аслă çыннăмăрсем - Шупуççынни, Шелепи, Митта. Яш чухнехи Хусанкайăн сăнарĕ курăнать çав халал сăввисенче.

Айхи, Воробьев, Теветкел, А.Юман, Вит. Юмарт, Ыхра сăввисенче поэт пĕлтерĕшĕ, унăн тăван культуринчи вырăнĕ çинчен сăмах пырать, унăн сăнарла, символла хакне палăртаççĕ вĕсем.

Çирĕммĕш ĕмĕрĕн чăвашсен аслă поэчĕ умĕнче пуç тайса, ăна ырăпа асăнса çырнă сăвăсем Хусанкăй Академийĕн çÿпçине кĕме тивĕçлĕ.

**Николай ШУПУÇÇЫННИ**

## ÇУРХИ ЧЕЧЕКШĔН

***Хусанкай юрри кăмăлне***

Сирĕлсе ирĕлекен сивĕ юр,
Лăймакаллă пылчăка илсе юх!
Мĕн кĕрлетĕн пăтранчăк
шывпала?
Мĕн асатăн вăхăтлăх вăйпала?

Иртсе кайсан, часрах иртсе кай
Ылханакан сана пит нумай!
Кĕрлесен те кĕрлĕн пĕр эрне,
Типĕнтерĕ сана çуркунне!

Хĕвеллĕ кун хĕрелет,
Сивве çĕнсе ăшă килет.

Эй, тăрар, эй, тухар:
Пĕр утар, пĕр чупар.

Кунтан кун пухăнар,
Çуркуннешĕн юр юрлар:
Пĕрререн –
иккĕшĕн,
Мăшăртан – виççĕшĕн!

Улăхра çарансем чĕтренсе
Тавлашаççĕ васкан шывпала.
Мĕнле юлĕç вĕсем
хирĕнсе?
Мĕнле çĕнĕç сивĕ тăшмана?

Кĕрхи курăк тымарĕ тытĕ те
Çырансене ишĕлме памĕ те.
Ак ĕнтĕ çип çинче,
Курăксем ир çинче!

Пăртак тăр, чутах кĕт,
Сарă хĕр, яш йĕкĕт,
Сарăлĕç, савăнĕç,
Чечеклĕн явăшĕç...

Ав чечек,
çут чечек –
Мерчен куçлă чечек:
Хĕрлĕ ярăм хырăмурли,
Кăвак тăрлă хăлхаунки,
Йĕри тавра яркăчи.

Кунтан-кун пухăнăр,
Ытармасăр
юр юрлар:
Пĕрререн çиччĕшĕн
Çиччĕ тăрри çитнĕшĕн.

**I.VI. – 1926 ç.**

## Н.И. ШЕЛЕПИ

***Хусанкай поэта /ырă сунса/***

Сăн-сăпатна сăнаса
Пăхатăп та –
Пушкĕн сăнь пек
Туйăнать вăл мана.
Тĕсӳ-питӳ салху,
Сăмаху япшар, –
Шăнкăрч сас пек
Илтĕнет хăлхана.

Таçтан тупнă эсĕ
Вăл поэт сăнне,
Вĕри Афрĕкри
Некăрсен юнне?
Пăхнăçем пăхас килет
Вăл мĕлкӳне,
Курас килет
Хĕрӳ, вут чĕлхӳне.

Те пĕчĕкçĕрен пит
Мĕскĕн ӳснĕрен,
Те йывăр хурлăх
Нумай тӳснĕрен
Çавă йывăр ĕçе
Хăйса тытăннă,
Те хастарлăхна
Лайăх сиснĕрен?

Арăслан пекех
Малалла ыткăнатăн,
Пултарулăхна
Хытă сăнатăн,
Хамăр çырулăх
Илемне курасшăн
Хĕрӳ вут çулăмĕ пек
Çунатăн.

Ĕçле-ĕçле,
Вĕренсе, хăват пухса,
Сцена çине
Сике-сике тухса,
Халăх çине хытă
Тинкерсе пăхса,
Çĕлен пек явăнан
Пусна ухса.

Хулăн тутусене
Мĕлт-мĕлт уçса,
Йĕпкĕн хура куçпа
Мăç хупса,
«Бис! Бис!» тесе
Нумай ал çуптарăн,
Хура кăтра çӳçне
Вăй вылятса.

Эсĕ çамрăк та,
Поэт та, студент та...
Санăн ĕмĕт нумай-ха
Нумай-ха малалла.
Хулара чăваш чĕлхи
Чухăн халĕ,
Питĕ хыт астумалла
Ялалла.

Чăваш чĕлхи
Пуйтăр, çутăлтăр тесен,
Пирĕн ăна вăй
Нумай памалла.
Ун çулне пĕлсе,
Сиссе юсамалла,
Хăйĕн тымарĕ тăрăх
Ямалла.

**12.II. – 28. Хусан.**

**МИТТА Ваçлейĕ**

## ПЕТĔР ХУСАНКАЯ

Ăшăм çунать,
Хыпать вăл паян ман...
Ăçта чикес
Тăр-ешĕл пуçăма?
Вăл вĕт тӳсет...
Чĕремçĕм, эс ан ман
Таçта ютра
Аташнă тусăма!

Епле тӳсес
Çак чиксĕр хурлăха?
Е куççульпе
Ярам-и юрласа?
Ăçтан юрлан!
Чĕремçĕм – хурлăхан,
Паян тытать
Вăл типĕ ураса.

Тӳсет ман тус,
Тӳсет вăл çич ютра...
Çыврать те пуль
Хӳменĕн хыçĕнче...
Тăван çĕршыв –
«Чечеклĕ çĕн утрав»,
Туй халĕ эс –
Мĕнле вăл çут тĕнче!

Тăван çĕршыв,
Çĕнелнĕ теç сана.
Ăçта сăну,
Çĕнелнĕ сан сăну?
Эс çĕнелмен!
Сан пуçлăх – тăмана.
Пĕтсех пĕтмен
Сан ирсĕр сăттану!

Тăван çĕршыв,
Чăн ывăл ăçта сан?
Ху ылтăнна
Пĕлмерĕн упрама.
Чĕппӳсене
Куллен-кун
    çухатсан,
Вара мĕнле
Пулатăн ыр ама?
Шеллеп сана,
Çĕршывăм, эп чунтан.
Сан хуçусем
Халь тухнă çăхана!
Капла пулсан,
Чĕр Вилĕм-каччу та
Ак сан пата
Час килĕ хăтана.

Чăн чĕлхӳне
Çураçĕç çăханне...
Çĕнĕ çынсем
Çуратĕç «вырăса».
Ак çавăнпа,
Çĕршывăм – ман анне,
Эп хыт тытап
Паян кун ураса...

Илтсем, тăван,
Ман йывăр сассăма.
Ан ӳпкеле,
Вăл ирсĕр пулсан та.
Ан каласам:
«Эс ешĕл, эс ăнман!» –
Ĕмĕр манми
Тăванăм Хусанкай!

**1927.**

## ÇАМРĂК ПОЭТА

*Петĕр Хусанкая*

Эх, тантăш, тантăш,
Эс-им, эс-им
Мана саватăн, юлташлан?
Е саншăн юрă altивес-им,
Е саншăн чаплăн эп ташлам?

Е иксĕлми çĕнĕ илемшĕн
Паян хушам-и çил çунат?
Чĕрем, чĕрем хыпса çунать,
Мĕскер эп, тантăш,
    кĕвĕлем-ши?

Тĕнчеленет
Умра ав шуçăм,
Умра –
Хĕрелнĕ асамат.
Çавсем çинчен юрлам
    кăтруçăн,
Çавсем
Тимлеççĕ сассăма.

Ĕмĕр сӳнми тăван кĕтесĕн
Амалансах пырать кăвар.
Эй, тантăш, тантăш,
Эс-им, эс-им?
Тавай
Пĕр харăс
Сас парар!

**1928.**

## П.ХУСАНКАЯ

Сана асăнсан – ялан пĕр сăмах:
«Чăваш тухйинчи чи пысăк ахах».
Анчах эп каласшăн: «Петĕр Питравĕ
Ахах кăна мар – пуянлăх утравĕ».

**1956.**

# ХУСАНКАЙ КӖНЕКИСЕМ

**Реквием выранне**

*Ҫӳренӗ ҫӗртен ҫитме*
*май килсен*
*Ҫитсе тапта ман тӑпрама...*
**П.Хусанкай.**
/Сӑн ӳкерчӗк айне
халалласа ҫырни, 1957/.

Акӑ ун кӗнекисем,
пилӗк-ултӑ кӗнеки...
Калӑн, унӑн япалисем,
калӑн, – ал ӑсти вилсен
унсӑр юлнӑ ал пӑчки...
Маншӑн – ҫавӑн пек вӗсем, –
сӑвӑ пуххисем ҫеҫ мар!
Тен, платник япалисем
вӑл вилсен ун ывӑлне
туйӑнаҫҫӗ ҫапларах:
вӗсенче куллен-кунах
ал ӑшши упраннӑ пек,
тӑлӑха пӗр ҫав анчах
сасӑсӑр ӑшӑтнӑ пек... –
«Камччӗ саншӑн вӑл?» –
тесен
шӑллӑмӑрсене шавах
хурланса чун-чӗререн
калӑп эпӗ пӗр сӑмах:
ӑшӑччӗ вӑл, ӑшӑччӗ!..
Тӑлӑх ӳснӗ ачасем,
кӑшт ҫырма пуҫланисем,
ҫав ӑшша кӑштах туйма
туртӑнатчӗҫ ун енне, –
ват салтак, вӗсен чунне
вӑл пӗлетчӗ ӑшӑтма, –
вӑл вӗсемшӗн –
ашшӗччӗ!..
Ашшӗсӗр ӳснисене
хамӑр халӑх ячӗпе,
хамӑр халӑх йӑлипе,
пулӑшма пӗлетчӗ вӑл,
пиллеме пӗлетчӗ вӑл...
Хӑй – мӗн ыйтрӗ вӑл
пиртен? –
Ыр аса илӳ анчах.
Пилӗ ун – пиншер чунта!
Хӑй вара чӗри кӳтсен
хуравларӗ виҫ сӑмах:
«Тӑпрама ҫитсе тапта...»

**1970.**

**Алексей ВОРОБЬЕВ**

# ТВЕРЬ БУЛЬВАРӖ

*Петӗр Хусанкая*

Шик те тумастӑн, Тверь бульварӗ,
Илтмен пекех ман сӑвӑпа
Тӗлӗнтерме сана пулмарӗ
Янравлӑ юрӑ-сӑвӑпа.

Ху ирӗкпе суйланӑ тертшӗн
Пӗр ху ҫеҫ айӑплӑ, тесе
Картишӗнчен пӑхать ав Герцен.
Кӗтет тата кам килессе?

Ан тив, шур тирӗк юрӗ ҫутӑр.
Куратӑп эп куҫа хупсан:
Ҫак бульварта кам йӗрӗ ҫук-тӑр?
Ӑсти этем килсе пусман?

Вӑл ҫавӑнпа ҫатма пек такӑр.
Ик енӗ – ешӗл кӑритур.
Ку чӑвашсен сукмакӗ, ахӑр.
Кунта туя йӗрри те пур.

Ухсах пулни, мӗн, пӑтӑрмах-им?
Паян та чӗр кӑвайт пуртан,
Поэзи каҫӑр урхамахӗ
Тапӑртатать тӑват уран.

...Салам,
Илемлӗх ҫилҫуначӗ!
Суха кассийӗн хӗррипе
Шав утнӑ май
Куҫу ҫунать-ҫке
Паян та ҫамрӑк хӗрӳпе.

Ҫилхе тыттарччӗ эс, тархасшӑн.



***Виҫӗ юлташ.***

Хӑш чух ямастӑн яхӑнне.
Чӗре ҫунать
Юман лартасшӑн
Тӑван ҫырулӑх вӑрманне.

Тахҫан ӗмӗтленни ҫак мар-и?
Ҫак мар-и паянхи шӑпа?
Чӑваш чӗлхийӗн Тверь бульварӗ
Кӗрлет ҫӗр те пӗр сасӑпа!

**1968.**

**Николай ТЕВЕТКЕЛ**

# ХУСАНКАЙ

Ҫӗкленнӗ, тет, суранлӑ ҫӗр тусанӗ
кив ӗмӗрӗн каштийӗ хуҫӑлсан.
Сассу янранӑ йӗс шӑнкрав
пек санӑн,
кӑвак хуппи чӑвашшӑн уҫӑлсан.
Чӑваш ҫырулӑхӗн хирне тухсан,
тантӑшусем сана курса ҫӗкленнӗ.
Чапу сан кайӑк пек ҫунат сарсан,
хӑвна сӑпайлӑхпа эс тӗрӗсленӗ,
тӑван поэзире ятна эс никӗсленӗ.

Ик ҫын – ик ҫутӑ
ят хутран-ситрен
чунна хавхалантарнӑ, хурлантарнӑ.
Курман эс вӗсене сӑнран, питрен:
эс Ивановшӑн, Ҫеҫпӗлшӗн
хӑпарнӑ
ҫырулӑх пусмипе – хыҫа хӑварнӑ
тантӑшусен нумай-нумай ретне.
Тӑван ҫӗршыв тӑван аннӳ
пек сарнӑ,
сана ытамласа илесшӗн, аллине –
выртса эс ӗҫнӗ пултарулӑх
ҫӑл куҫне.

Санпа ҫӳренӗ теветкел Есенин
сӑвӑласа маттур яшлӑхунта.
Эс туйнӑ картари утсем кӗҫеннӗн
ҫырас сӑввусене – умри хута
тем анлӑш хир пек курнӑ сӑв-
вунта
вулакансем сике-сике
утланнӑ
сӑвву ҫине – хӑть сик
шыва, вута –
ҫын тупнӑ килӗшӳлӗх,
чӑрсӑрланнӑ:
ҫил ҫунатлӑ Олимп сӑрт-
тӑвӗнчен-ҫке аннӑ!

Кун-ҫул кункри ҫинче
уна-уна
тӗпченӗ вӑхӑту:
«Ҫитет-и тӳсӗм!»
Эс пӑхнӑ тӳррӗн
йӑл кулса кӑна:
–Ҫук, чуста мар эпир –
чӑн хурҫӑ ӳсӗм.
Ах, самана! Вӑл
яланах ерҫӳсӗр,
тӑрса юлсан кӗтсе
тӑмасть сана:
вӑл юратать хӑйпе утакана.
Пӗр вӗҫӗмсӗр арланнӑ пурнӑҫ сӳсӗ,
ҫулсен ҫӑмхисене кустарнӑ
самана.

Пӗрремӗш тракторсем
чӑваш хирне
тухсассӑн акана, эс уҫҫӑн курнӑ
ешерекен калчан ӗлккен пирне:
ку – ҫӗнӗ ӗмӗр ырлӑхӗ, ку –
пурнӑҫ!
Анчах та анӑҫран хура вӑй утнӑ:
тапраннӑ вӑрҫӑ – кайнӑ эс ҫара.
Хастар чӗрӳ хӑш чух ыратнӑ,
сурнӑ–
мӗн чул кӗлленнӗ ял-хула умра!
Ак Ҫӗнтерӳ! Пуҫа усман хӑюлӑх
ҫитерчӗ анӑҫран ӑна илсе.
Аван-и, Чӑваш ен?! Вӑрман та улӑх
сана пуҫ тайнӑ: ывӑлӑм, килсем!

Хаваслӑн пынӑ ҫакӑнса, вылянӑ.
Чи тӑнӑҫ пурнӑҫпа тӑван килсем
тип шар кӳрен хыпарсӑр тин
пуҫланӑ
хевтеллӗн пурӑнма: ҫӗр
ирӗккӗн сывланӑ.

Ҫӗршывӑм тӳснӗ пысӑк ҫухату та
тӗксӗмлетмен малашлӑх хӗвелне.
Килес кунсен ӗречӗ пулнӑ тутӑ,
тек выҫлӑх шаккаман асав шӑлне.
Поэт-салтакӑн шухӑш-кӑмӑлне
ҫунатлӑ шанчӑк панӑ ҫӗкленӳлӗх
халь чӗннӗ ҫӗнӗ сӑвӑсен йышне.
Ӑшра тапса тӑран таса хӗрӳлӗх
ӑсталӑх ялавне тата
ҫӗкленӗ ҫӳллӗ.

Этем шӑпи ҫӗршывӗпе татуллӑ:
апла пулсан, вӑл ун юратӑвне
илет тивӗҫлипе – ҫӗр уншӑн тулӑх,
анчах пӗлет вӑл ун хакне, сумне.
Мӗскер хушса калар-ха кун ҫумне?
Ун кун-ҫулне паян ытараймасӑр
тӗпчевҫӗсем тӗпчеҫҫӗ – сӑмахне
чун тараси виҫет пӗртте
канмасӑр –
япала пек тытса пӑхас
килет шанмасӑр.

Пӗррехинче юлташ
каларӗ ӑшӑн:
– «Онегина» вулатӑп чӑвашла.
Ларма-тӑма памасть
пӑлханнӑ ӑшӑм,
ҫӳресчӗ ҫӗр ҫинче ташла-ташла. –
Ҫук, пулмӗччӗ пӗрре те кулӑшла!
Юлташ вулать –
итлетӗп эп чӗнмесӗр:
чӗлхем, чӗлхем! Эс шурӑ акӑшла
чун кӳллинче ишен хум
ҫӗклемесӗр,
калас килет: чӑваш, телейллӗ эсӗ!

Телейллӗ эс Хусанкайсем пуртан,
хиствеллӗ сан ӑсу, ӗҫчен те йӳрӗк.
Эс кӳлмӗн кӑмӑлна кӗске турта,
ҫӳремӗн шухӑшсӑр,
тӗллевсӗр, сӳрӗк.
Ӑсталӑху сана ялан чыс кӳрӗ:
нихҫан та пӑрӑнса унран ан кай.
Сана ялан ҫул кӑтартса вӑл ҫӳрӗ –
шанса пӑхать, ав, сан ҫине пӗрмай,
гранит кӗлеткене куҫсан та,
Хусанкай.

**1983.**

**Виталий ЮМАРТ**

# ХУСАНКАЙ

### 1. Палӑк

Тем тупассӑм пек кӗретӗп
Тӗл килсессӗн ҫак парка.
Йывӑҫсем ӗрет-ӗретӗн,
Пурте йӑрӑс та парка.

Пӗр вун пилӗк ҫул пулать пуль:
Ялӑм-йышӑм кӑмӑлне
Эсӗ лартнӑччӗ пӗр тополь
Чӗрӗ палӑк вырӑнне.

Ав, пӗри пит тӑпӑлкка та, –
Ун патне утса ҫитеп.
Ҫакӑ-ши тесе пӑхатӑп,
Уйрӑм паллӑ пур-ши теп.

Кам пӗлет – хӑшне кам лартнӑ,
Ун ҫинчен шутлать-и сын? –
Пурте ҫирӗп, пурте латлӑ.
Пурте тикӗс ӳсӗҫин...

Ӑнкарсассӑн, тупсӑм ҫавӑ:
Ҫӗтесрен манӑҫура
Саншӑн палӑк – чӗрӗ Сӑвӑ,
Ятшӑн лартнӑ йывӑҫ мар.

Сиплӗ сӑвӑ пурӑнсассӑн
Пӗр ҫӗр аллӑ-ик ҫӗрне,
Кивелмесӗр упрансассӑн
Вӑй парса тӑван ҫӗрне,

Тупӑнӗ эс лартнӑ паттӑр –
Вӑрӑм ӗмӗрлӗ тирек.
Халлӗхе вӑл туратлантӑр
Йыш ҫинче ятсӑррипех.

Ун чухне – халь ҫамрӑк паркӑн
Йывӑҫҫи тӳнсе пӗтсен –
Ҫавӑ ларӗ патриархӑн
Ҫӗн хунав ҫинче пӗччен.

Ҫуммӑн – харсӑр несӗл кайӗ.
Аслине, ӑру пуҫне,
«Акӑ, – тейӗҫ, – Хусанкайӑн –
Ҫак упрать ун пиллӗхне».

### 2. Сӑмах

Кӑвак хуппи куҫ чалӑртса
Янрать-и ҫав? –
Хура та кӑп-кӑтра ачан
Чунра – хускав.

Сасартӑк кӑмӑл вырӑнне
Килет Сӑмах –
Элчелӗн ыр тухатӑвне
Тупассӑнах.

Вӑл улӑп та хавалӗпе –
Сасси ҫинҫе.
Чул витӗр тухнӑ курӑк пек
Хастар, ҫемҫе.

Типшар ӗнтсен,
сив тӑм ӳксен
Шанасшӑн мар,
Юнавлӑ хуптӗре сирсе
Ӳсет патвар...

Ӑна пӗлмеҫ-ха чӗрӗ шыв
Пуласси̇не
Тӑван чӗлхе, тӑван ҫӗршыв,
Тӑван анне.
Октябрь пиллӗ – чӑтӑмпа
Чӗрӗлӳре:
Кӑра та ҫил – хастарлӑхпа
Сикет чӗре.

Чӗртсе чун кӗнӗ халӑха,
Пӗрле тӳссе,
Асамлӑ вӑй пулмалӑхах
Ҫитет ӳссе.

Кӗр! кайӗ ахрӑм ҫав сасран
Чӑваш енче...
Кӑтра ача тӑрать ҫарран
Ҫерем ҫинче.

### 3. Чӗре таппи

Чӑвашлӑх маншӑн мул хутаҫӗ мар:
Экзотика шыран тӑлмачӑна
Хак ӳстерсе куҫне шартасшӑн мар
Сӑввӑмсенче шыратӑп эп ӑна.

Салху аваллӑхра чакаланаҫ,
Шыраҫ ҫухалнӑ ӗмӗрсен сӗмне. –
*Чӑвашлӑх чӗрӗ. Ҫитрӗ вӑл хальхаҫ*
Ҫӗр чӑмӑрӗн юлташӗ вырӑнне.

Пире вӑл кирлӗ сывлӑшпа пӗр тан,
Тухатмӑш чӳклемесӗр, паянхи, –
Саманаран пӗрре те уйрӑлман
Ӗҫлевҫӗ-халӑх кӑмӑлӗ, чӗлхи.

Халь вӑй хушса кӑна пыратпӑр-ха,
Ҫавна ӗнен те ӗҫ-пуҫна хайла.
Кирек мӗнле тархаслӑ вырӑнта
Хастарлӑха упрар Хусанкайла.

Чӑвашлӑх вӑл малашлӑхшӑн
тӑван, –
Унран писсе хама упрайӑп-и?
Тиллин типмен чӗрлӗхӗпе халлан,
Пурнӑҫӑма тӑсса, чӗре таппи!

### 4. Хушаматӑмӑр

«Йӑваш – чӑваш» састаш
лӳпперлӗхпе
Мӗскӗнленсе пире халтан ан ятӑр.
Тӑванӑмсем, поэт пиллӗхӗпе
Тин тупӑнчӗ чӑн хушаматӑр-ятӑр.

«Аптрамансем» –
словарь картман Сӑмах.
Анчах вӑл ӗмӗр кивелми пахалӑх.
Ун тупсӑмне упратӑр яланах
Ӑру палли тесе этеплӗ халӑх.

Ӑсчах супса шайланӑ ӑнсӑрт мар!
Поэт чунне вӑй панӑ чӑн чӑвашлӑх,
Чӗре таппи пулса, пурсӑмӑрта
Ӳссе пырать сӑпайлӑ та капашлӑ.

Хура аваллӑхран паян куна
Чӗрхаллӗн ҫитнӗ халӑхӑн хавалӗ,
Пиҫӗлӗхпе хевте хушса чуна,
Поэт ят хунӑ сӑмахпа ҫуталӗ.

### 6. Пӗрлӗх

*/Бунин кӗввипе/*

*Пӗрлӗхе ҫынсем сисеҫҫӗ,*
Эс те туйнӑ пуль чӑнах:
Сан чӗрӳ вӑл – хӑвӑн ҫеҫ те,
Сан чуну вӑл – ман чунах.

Хӑй кайсан – пӗлнех-тӑр сӑвӑҫ –
Ытарми тӑван ҫӗре
Ыттисем ун евӗр савӗҫ, –
Кам пулсан та, пурпӗрех.

Çакăнтан тепри юп курĕ
Ешерсен ыраш калчи,
Çурт çумне лартса тĕс кӳрĕ
Улмуççи, хăмла шалчи...

Поэтсем пулмаç пĕччençĕ
Хăй çуралнă вырăнта...
Пирĕн чунăмăр, пиччеçĕм,
Санăн та мар, манăн та.

**1984.**

**Анатолий ЮМАН**

# ПУЛАТĂП ИККĔМĔШ ЮМАН

/«Псевдоним» поэмăран/

Яш чух, поэзи уйнелле
Тухайнă май,
Пĕрре тĕл пулчĕ ирпеле...
Кам? Хусанкай!

Тăратпăр иккĕн: вăл – пичче,
Эп – шăллĕ ун.
Вăл – чăн поэзи тӳпинче,
Вăркать ман чун.

Эп çĕкленсе курман хальччен
Олимп çине.
Мана çитерчĕ Чĕмпĕр ен
Чăваш енне.

Каçалăка уçма тесе
Эп пынă çеç.
Поэзи юратать тĕсе,
Поэзи – ĕç.

Сикет, сикет ман яш чĕре
Хумханнăран.
Кам пĕлтĕр лайăхрах пире
Хусанкайран?

Союз керменĕ вĕллене
Ас илтерет:
Пĕри тухать те тул енне,
Тепри кĕрет.

Чипер пике шаккать хута
Машинккипе.
Ĕç-пуç куллен çапла кунта –
Шыв сикки пек.

Юхать сăмахăн çăнăхĕ
Лапаткана.
Союз керменĕн çенĕкĕ
Тăвăрланать.

Уйăп Мишши тăрать кĕрсе,
Куçма Чулкаç...
–Мĕн юмахлаççĕ поэтсем?
Мĕн калаçаç? –

Тĕпчет кайран пырса тăни
Кăсăкланса.
Каять сасартăк йыш тени
Пысăкланса.

Карталанса пĕрлешрĕмĕр
Тĕл пулнă май.
Чи варринче – хĕвелĕмĕр,
Хăй Хусанкай.

Ытти-хытти – планетăсем,
Вĕçетпĕр çак,
Аякрисем, çывăхрисем,
Капмар е вак.

Сăмах-юмахĕ ман тавра,
Эп чи çĕнни.
–Курсаттăм, сумлă журналта
Тухать çырни, –

Калаçрĕ ăшшăн Хусанкай
Çаплах манпа.
Куçран пăхса сăнанă май
Хавас сăнпа.

–-Хушаматпах çапатăн-и
Поэмуна?
Халь кирлĕ чаплă псевдоним,
Ачам, сана.

Ят пултăр вăл элес-мелес,
Чăн-чăн пăта!
Мĕнле-ха палăк лартăн эс
Ахаль ята?

Эпир çыратпăр чăвашла,
Эпир – чăваш.
Яту та пултăр хамăрла,
Поэт юлташ!

Планетăсен уявĕнче
Тăракансем
Алхапăлах куннехинче
Кулма тесен.

Епле эс кулмăн кулăран?
Поэт та – çын.
Ку вăл тахçанах пулнăран
Çеç хурлă чун.

Сăмахĕ халь те хăлхарах,
Асрах сасси...
Хĕвеллĕ сăнĕ те, ара...
Мĕн каласси!

Каларăм çавăн чух пăртак
Хăюлланса:
–Пĕр псевдонимĕ пур-ха, ак,
Питех ансат...

Атте çӳренĕ ачаран
Çав ятпалан.
Юман унччен те пулнăран
Çырма хăйман.

–Юман?!.
–Çапла, атте ку ман...
–Пит чаплă ят!
Пулатăн иккĕмĕш
Юман, –
Поэт калать.

Вăл савăннă, кăвар чĕре,
Шӳтленĕ май
Лăпкарĕ çурăмран пĕрре...
Кам? Хусанкай!




***Митта Васлейĕн халалĕ.***

Вăл çыпăçтарчĕ ман çума
Çав кив ята:
Çĕнелтĕр кирлĕ ĕç тума
Ку ят-пăта!

Каллех кермен кĕр-кĕр кĕрлет
Кулăпалан:
–Атьсемĕр, çĕн Юман килет!..
–Ак япала!

**1988.**

**Анатолий ТИМОФЕЕВ–ЫХРА**

# ВĂРМАН ПУÇĔНЧИ ЮМАН

*Петĕр Хусанкая асăнса*

Ват Шупашкар вăрманĕ хĕрринче
Каçăрăлать çуррийĕ çуннă йывăç.
Армак-чармак турачĕ тăрринче
Шур пĕлĕт шăтса тухнă йывă.

Çич çул таран ăнмарĕ те йĕкел,
Пĕлтĕрхи кĕр хăмла пекех чĕкелчĕ.
Килсе çапсан раштав-кăрлачлă хĕл,
Юман пил пачĕ:
«Пур! Пулатпăр! Ĕччĕ!»

Виç çулçăллă тунасене пăхса
Халь ывлăмпа хĕпĕртесе тăратпăр.
Пурнăçĕсем пулминччĕçех хаса,
Çунсассăн та ан çунччăр,
ӳсчĕр паттăр.

Хум килнипе чашлать вун-вун хунав:
Кунта чăваш чӳке çӳренĕ çав.

**1996.**